**Анатолий КИБЕЧ**

# Юмах тени ырра вĕренттĕрччĕ

Ача юмахсăр ÿсмест. Ытла та лайăх мел шутласа тупнă-çке пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем, юмахпа усă курса пĕчĕк ача чĕринче ырă туйăм çуратма тăрăшнă. Чи илемлĕ те ăслă юмахсем, паллах, халăхра анлă сарăлнисем. Унта пурте ырăнлă, пĕр ытлашши сăмах та, нимĕнле пăтранчăк шухăш та çук.

Юмах жанрне çыравçăсем килĕштерни те паллă. Куçма Чулкаç ав юмахĕсемпех чапа тухрĕ. Çыракансем татах та пур-ха, анчах пурин те ăнăçлă пулса тухмасть. Юмах ăстисем Чăвашра çеç мар, тĕнчипе те сахал: урăхларах шухăшлав тата ача-пăча психологине лайăх пĕлни кирлĕ. Унсăрăн хайлав юмах шайне лараймасть. Вуласа пăхар-ха Р.Сарпи юмахĕсене («Тăван Атăл», 2007, 8№). «Сар чечек» ятлă хайлавра ĕç-пуç Сар Чечекпе Шапашка хушшинче пулса иртет. Шапашкă тесе пĕчĕк шапана каланă та-ха, анчах пачах та чăвашла шухăшлавран тухнă ят мар, вырăслатса каланăскер. Сар Чечек тилĕ çывхарнине курсан Шапашкăна хăй çеçкипе хупласа çăлса хăварать. Тилĕ айккинелле пăрăнсан Сар Чечек Шапашкăна ирĕке ярса «тав сăмахĕ кĕтсе» тăрать. Анчах кĕтсе илеймест. Харкашу пуçланса каять. Юрĕ-ха, ырă ĕçе ăна тав сăмахĕ илтессишĕн туманни пирки калаçмăпăр. Урăххи çÿçентерет. Автор Шапашкăна ытла та хаяр сăмахсемпе вăрçтарать:

«Ниме тăман чечек! Путсĕр! Çĕр çăттăр сана, пĕт эсĕ. Вил!.. Эп сана-и? Эп сана вĕлермесĕр те лăпланмастăп».

Асăннă хăрушă сăмахсем пачах та пĕчĕк ачасем валли мар, юмах чĕлхи те мар, бандитсен калаçăвĕ евĕрлĕскер кăна.

Çакăн йышши калаçу ытти юмахсенче те сисĕнет. «Саплăклă шăлаварти» пĕчĕкçĕ Илемпи амăшне темиçе хутчен: «Çĕнни илсе пар!» – тесе кăшкăрса ыйтать. Тăвайккинче пĕрле ярăнакан юлташĕсем Илемпирен саплăклă шăлавар, кĕлмĕç тесе кулаççĕ иккен. Кунта та ĕненÿлĕх çук. Ярăннă чух ачасен савăнăçĕ пачах та тумтирте мар, мĕнле лайăхрах ярăннинче. Çав самантра пуянлăхпа чухăнлăх пирки калаçни ача-пăча психологипе пач та явăçса тăмасть. Çакă вăл автор ачасене хăй пек калаçтарни çеç.

«Тюльпансем» юмахра Р.Сарпи пĕчĕкçĕ хĕр ачана алла лум (?!) тыттарса кÿршĕ хÿмине хирсе уçтарать те ют пахчана кĕртсе ярать. Сăлтавĕ вара самай иккĕленÿллĕ пек. Кăнтăр енчен çил вĕрнĕ чух юнашар пахчаран хĕр ачасем еннелле тутлă шăршă сарăлать иккен. Кÿршĕ пахчинче вара, тĕрĕссипе, таврана шăршă сарма пултаракан сирень те, çĕмĕрт те, жасмин та çук. Пĕр кĕтесре пысăках мар

УÇĂ КАЛАÇУ

тюльпан йӑранӗ кӑна. Тюльпан шӑрши хӳме урлӑ каҫса юнашар киле сарӑлмалӑх ҫуккине пӗлетпӗр ӗнтӗ, автор анчах чухлаймасть. Хӗр ача чечексене татса кайнине асӑрхасан вӗсем патне Макар мучи пырса каять.

«Макар мучи нимӗн те чӗнмерӗ, – вулатпӑр юмахра, – пуҫне сулкаласа сада тухрӗ. Куҫ айӗн сӑнаса тӑтӑм: эпӗ хӑйпӑтса ӳкернӗ хӑмана хӑй вырӑнне лартрӗ те лумпа ҫапса хытарчӗ. Вара ҫаплах пуҫне сулкаласа тухса кайрӗ». Хӗрарӑм шухӑшлавӗ ӗнтӗ.

Тепӗр хут йӗркипе пӑхса тухар-ха. Хӗр ача малтан чышса пӑхса тӗрӗслесе саккӑрмӗш хӑма пушӑраххине пӗлет, унтан силлесе кӑштах хускатнӑ хыҫҫӑн лумпа хирсе уҫать. Хӑми лаш! ҫеҫ хӑйпӑнса ӳкет. Тӗрӗслӗх вара урӑхла: аялти пӑтине кӑларнипе хӑма лаш! ӳкмест, ҫӳлти пӑти тытать. Хӑмана «чышкӑласа пӑхса» хускатнӑ хӳме кашти хӗр ачасен енчине пӗлтерет. Апла тӑк Макар мучи хӑмине лумпа ҫапса тӳрлетсен кӳршӗсем патӗнчен тухса кайма пултарайман. Лумпа пӑта ҫапни те ӗненӳллӗ мар. Йӗркеллӗ арҫын ун пек чух пӑтине кӑларса тӳрлетет те ҫӗнӗрен ҫапать, малтанхи шӑтӑка кӗртмест. Кунта вара лумпа нимӗн те тӑваймӑн. Пӑта валли мӑлатук пур.

Хӗр ача татса тухнӑ тюльпансене турпас татӑкӗпе шӑтӑк чавса ҫӗре лартса шӑварать. Чечексем каҫа хирӗҫ пур пӗрех шанаҫҫӗ. Лум тытса хӳме ҫӗмӗрме пултаракан ялта ӳсекен хӗр ача татнӑ чечек упранманнине пӗлетех ӗнтӗ. Мӗнле читлӗхре ӳснӗскер-ши вара вӑл? Паллах, ӗҫпе туслӑ ӳсекенскер мар, Верук тусӗ ав «килте ҫук, хур ҫитерме кайнӑ», ку вара мӗн хӑтланнине куртӑмӑр ӗнтӗ. Тюльпан чечекне черккепе танлаштарни те пӗчӗк ача шухӑшлавӗ пек туйӑнмасть.

Шухӑшлаттаракан вырӑнсем «Пӗчӗк сӗтел» калавра та тӗл пулаҫҫӗ («Тӑван Атӑл», 2007, 7№). Ашшӗ ултӑ ҫул тултаракан Илемпи валли пӗчӗк сӗтел хатӗрлет. Сӗтелне туса та пӗтермен-ха, сӑрласа та илемлетмен. Илемпи тӳрех: «Ай! Мӗнле хитре! Сӗтел! Пӗчӗк сӗтел!» – тесе кӑшкӑрса ярать. Каярах ашшӗне ҫапла хушса хӑварать: «Атте, эсӗ сӗтеле кӑвак сӑрӑпа сӑрла! Сӗтел варрине сарӑ хӗвел ӳкер, хӗррисене вара – чечексем. Урисем ҫине – ҫырласем. Юрать-и?»

Ултти ача ҫапла калаҫать-ши? Шухӑшне ҫакӑн пек предложенисемпе пӗлтерет-и? Кӑвак тӗс пирки те иккӗленӳллӗ. Психологсем, ӳнерҫӗсем ӑна сивӗ туйӑм ҫуратакан тӗс теҫҫӗ. Пӗчӗк ачасем вара урӑхлисене, савӑнӑҫлӑраххисене, ҫутӑраххисене килӗштереҫҫӗ.

«Кишӗре касса кӗмен-ши?» тенӗ чухне «тӑпӑлтарса» тесен, «параппан каласа ташлаттарӑп» тенӗ чух «ҫапса», пукана «пӳрт варрине кӗртсе лартрӗ» тенӗ чух «урай варрине» тесен тӗрӗсрех мар-ши?

«Ах! – тесе сассӑр кӑшкӑру янрарӗ вӑрманта» тенине тата ачасен мӗнле ӑнланмалла-ши?

**РЕДАКЦИРЕН.** Анатолий Кибеч хаклавӗпе эпир паян анлӑ калаҫу пуҫласшӑн. «Ача-пӑча литератури хальхи вӑхӑтра мӗнлерех пулмалла?» – акӑ унӑн теми. Ҫыравҫӑсемпе вулакансенчен статьясем, тӗпчевсем, тишкерӳсемпе тӗрлӗ шухӑшлӑ ҫырусем кӗтетпӗр.